**Ева ЛИСИНА**

# Садри шăллăм, е эпĕ Фатимана йĕртесшĕн мар

**Калав**

I

Ку – шухăшласа кăларнă хайлав мар. Эпĕ çак калава пурнăçра пулса иртнине тĕпе хурса çырнă.

Вăрçă хыççăн выçлăх пулчĕ. Хăрушла выçлăх: лараканни ларнă çĕртех вилме пултарнă, тăраканни ура çинчех вилсе кайма пултарнă. Эпĕ, çиччĕри хĕрача, кӳршĕ килтен умлă-хыçлăн икĕ тупăк йăтса тухнине курнă. Пĕррехинче пирĕн пата паллă-малла мар шыçăнса кайнă çын кĕчĕ. Вăл вăрмантан килнĕ пулас: ун карçинккинче темиçе кушăхнă кăмпа выртатчĕ.

– Лайăх кăмпа ку, ил... – терĕ вăл манăн аннене. – Мана пĕр улма парсамччĕ... Тен, çур улма...

Анне сехĕрленсе ӳкнĕччĕ.

– Кавĕрле пичче ку, вилет пулĕ... – терĕ вăл мана пăшăлтатса. – Чуп-ха вĕсем патне. Часрах килччĕр. Хăть тăван килĕнче вилтĕрччĕ...

Эп пахча урлах Тукаса чупрăм. Кавĕрле пичче ывăлĕпе кинĕ чупса çитрĕç. Вĕсем тăнне çухатнă ашшĕне тăратайка çине вырттарса илсе кайрĕç. Анчах Кавĕрле пичче тăван килне çитеймерĕ, çул çинчех вилчĕ.

Çавăн пек кунсенче пирĕн пата пĕр арçын ача килчĕ. Пăхма вунвиçĕ-вунтăватă çултискер пулмалла. Выçлăх вăл сарă çӳçлине те тĕссĕрлетет. Çак ача – хыткан та хура çӳçлĕ пулин те – тĕксĕмленменччĕ, унăн пит-куçĕнче халь-халь тапса тухассăн туйăнакан чĕрĕ вăй сисĕнетчĕ. Вăл ман аннене пĕчĕк çыхă тыттарчĕ те лăш сывласа ярса – калама çук йывăр япалана çитес çĕре чиперех çитерейнĕ пек! – алăк патне кайса тăчĕ.

Анне çыхха салтрĕ те, хăй мĕн курнине хăй ĕненмен евĕр,

куçне аллипе хупларĕ. Эпир, виçĕ ачи, аннене хупăрласа илтĕмĕр.

– Анне, мĕскер унта, мĕскер?

Анне куçне уçрĕ те ача çине пăхса илчĕ. Лешĕ, йăлтăр кулăпа çуталса (авă мĕнле чĕрĕ вăй тапса тăнă унра!): "Сирĕн валли ку!", "Сирĕн валли ку!" – тенĕ евĕр, хавассăн пуçне сулчĕ.

Анне çыхăран виçĕ пашалу кăларчĕ. Йывăç çулçине тӳсе пĕçернĕ пашалу çӳп-çӳхе те симĕс е хура пулать. Ку пашалусем хулăнччĕ, тĕсĕ те урăхлаччĕ. Анне тата пĕчĕк хутаç кăларчĕ те: "Кĕрпе!" – тесе пăшăлтатса илчĕ. Эпир нимĕн те ыйтмарăмăр, анне çине те пашалу çине çеç пăхса лартăмăр. Анне ачана сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ. Вăл ăна хăналасшăнччĕ ĕнтĕ. Пуш-пушă килте ăна мĕн сĕнме пулатчĕ-ши? Хăй илсе килнĕ пашалăва пулинех... Ача вара пирĕн килте хăйĕншĕн пĕр тĕпренчĕк те тăкакластарас темерĕ курăнать.

– Юк, юк![*] – терĕ вăл.

Вăл хăй валли шыв çеç ыйтрĕ. Пуссем типсе пыратчĕç, çавах тĕпĕнче шывĕ пурччĕ-ха. Анне ачана пĕр алтăр шыв ăсса пачĕ. Лешĕ каллех йăлтăр çуталса илсе "Рехмет![**] терĕ те шыв ĕçнĕ хыççăн васкаса тухса кайрĕ.

Эп ăна чӳречерен курса юлтăм. Мана ун утти тĕлĕнтерчĕ: хăвăрт та çăмăллăн пырать. Ун чухне çавнашкал утакан юлманччĕ те, юлашки вăйне перекетленĕ пек çынсем урисене çĕклесе мар, сĕтĕрсе утатчĕç.

– Кам ку? Вăл ăçтан килнĕ? – ыйтрăмăр эпир аннерен.

– Вăл аякран, тутар ялĕнчен Шăнкăртамран килнĕ. Вăл – Садри мăнукĕ.

Шăнкăртам тутар ялĕ иккенне пĕлнĕ-ха эпĕ. Анчах нихăçан та вăл енче пулса курман, çавăнпа çак ял питĕ аякра, тĕнче хĕрринчех ларнă пек туйăнатчĕ. Апла ку ача пирĕн пата тĕнче хĕрринченех килнĕ. Ун чухне, çуклăхпа выçлăх хуçаланнă чухне, чи нумаййи тусанччĕ: пĕтĕмпе – çулçă сараймасăрах çунса тĕпреннĕ папкасем те, шăрăхпа вĕтеленнĕ çулçăсем те, хуçăлса анакан хăрăк туратсем те, тымарĕ таранах типнĕ курăксем те – тусан пулса вĕçетчĕ. Улăм витнĕ хуралтăсен çийĕ тусан купи пек курăнатчĕ. Çил çӳлтен вĕрнĕ чухне хăш-хăш "купи" ишĕлсе анатчĕ те урам тăрăх çӳп-çаплă тусан çавăрттаратчĕ. Çак тутар ачин ĕнтĕ хĕрсе кайнă тимĕр евĕрлĕ хĕвелпе вĕри тусан хушшипе тĕнче хĕррине çитмеллеччĕ. Ăна çул çинче мĕн вăй парса тăнине эпĕ каярахпа çеç ăнкартăм: унăн часрах тăван ялне çитсе, алăка яри уçса ярса: "Пирĕн чăвашсем чĕрĕ!" – тесе пĕлтерес килнĕ...

Пĕр-икĕ уйăхран çак ача пирĕн пата тата тепре килсе кайрĕ. Вăл питĕ асăрханса кĕнĕ пулас: эпир калинкке уçăлнине те курман-илтмен. Вăл пӳрт алăкне те майĕпен-майĕпен уçса малтан пуçне чиксе пăхрĕ (пушă çурта

[*] юк (тутар.) – çук.

[**] рехмет (тутар.) – тавах.

çапла кĕреççĕ пулĕ, тата: "Кунта чĕрĕ çын пур-и?" – тесе ыйтаççĕ пулĕ). Пире курсан вара хавассăн кăшкăрса ячĕ:

– Яхшы!*

Мĕнле кирлĕ пулнă пире çак сăмах, çак савăнăç! Эпир, пилĕк çын, пĕр-пĕринпе ыталанса илтĕмĕр. Пирĕн çав тери, çав тери çак ачапа калаçас килетчĕ. Эпир, виçĕ ача, хамăра пӳрнепе тĕлле-тĕлле ăна хамăр ятăмăрсене пĕлтертĕмĕр. Вăл, пире култарас тесех пуль, кашни ята илтмессерен шалтах тĕлĕннĕ пек куçне чарса пуçне пăркаларĕ, чĕлхипе чаклаттарчĕ. Унтан хăйне кăкăрĕнчен çапса илчĕ:

– Ильгиз!

Ильгиз – илемлĕ ят. Шăпах çак ачана юрăхлă ят.

Малтанхи пекех Ильгиз виçĕ пашалу илсе килнĕччĕ. Тата çăнăх та пурччĕ. Çăнăхĕ нумайччĕ: ывăç та мар, йĕкĕр ывăç та мар, питĕ-питĕ нумайччĕ – пĕр кило та пулĕ...

Ильгиз хальхинче те хăналанасшăн пулмарĕ, шыв ыйтса ĕçрĕ те тӳрех каялла инçе çула тухса кайрĕ. Унăн ĕнтĕ хура сăн çапнă ялсем витĕр, пуш пучахлă хирсем урлă утмаллаччĕ. Выçăпа асапланакан пĕр ялпа выçăпа асапланакан тепĕр ял хушшинчи çул çинче çав тутар ачине ĕнтĕ унчченхи хыпарах – "Пирĕн чăвашсем чĕрĕ!" – ураран ӳкме паман...

## 2

Çавах та эпир çуркуннене çитрĕмĕр. Кĕтӳ кăларнă кун урамра пĕтĕм халăх ĕнесем çине – пĕр сассăр, сулăна-сулăна кайнă пек аран пыракан ĕнесем çине (вĕсем хушшинче ĕнтĕ ури çине тăрайманнипе вĕрен вĕççĕн йăтса тăратнисем те пулнă) – сехĕрленсе пăхса тăратчĕ... "Укăлчаран çеç тухайинччĕ... – терĕ манăн анне хамăр ĕне çинчен. – Укăлчаран çеç тухайинччĕ, хирте ĕнтĕ курăк шăта пуçланă..."

Курăкĕ хăвăрт ӳсетчĕ. Тимлĕн пăхсан ӳсентăрансем пĕр вĕççĕр хускалнине асăрхама пулатчĕ: вĕсем саркаланатчĕç, кармашатчĕç, лăс-лăс силленетчĕç. Выçлăх тертне пĕрле тӳссе эпир пĕр-пĕрне ăнланакан пултăмăр тейĕттĕм, эпĕ вĕсем шăпăлтатнă чухне пире, этемсене, çапла каланине ăнкараттăм: "Урăх ан вилĕр, кăштах, кăштах тӳсĕр-ха тата... Эпир васкавлă ӳсĕпĕр те сирĕн валли çимĕç çитĕнтерĕпĕр – нумай-нумай тутлă çимĕç парăпăр".

Çулталăк ытла хуçаланнă шелсĕр çанталăк хăварнă сурансене ачашшăн пăхакан хĕвел, йăш-йăш çумăр, вăш-вăш çемçе çил сиплерĕ. Пуссене шыв тулчĕ. Унччен кашни симĕс çулçа апат валли тататчĕç, халĕ вĕсем пĕр шикленмесĕр, ирĕккĕн вылянатчĕç. Хуткупăссем те вăранчĕç. Ялăн ĕмĕрхи илемĕ – муклатни, мекеклетни, какăлтатни, пиклетни, чĕвлетни, чĕвĕлтетни – çĕнĕрен чĕрĕлчĕ.

---

*яхшы (тутар.) – лайăх.

Манăн ялăм, икĕ çула яхăн ыйткалакан евĕрлĕ пулнăскер, хура пĕркенчĕкне сирчĕ те куççулĕ витĕр ăшшăн йăл кулса çуталса кайрĕ... Çуркуннехи сар çеçпĕлĕм...

Хамăр ялти çичĕ класлă шкултан вĕренсе тухсан эпĕ вуникĕ çухрăмри Арапуçĕнчи вăтам шкулта вĕрентĕм. Хваттерте пурăнаттăм. Хваттер хуçи, Плаки инке, тăлăх арăмччĕ. Пуçтарăнтăмăр эпир ун килĕнче пилĕк ача, ашшĕсене вăрçăра çухатнă çур тăлăхсем: виççĕшĕ – Плаки инке ачисем, эпир – эпĕ тата манпа пĕрле пĕр класрах вĕренекен ирçе ачи Валерий – хваттерте тăракансем. Плаки инке патĕнче виçĕ çул пурăнса та эпĕ хама нихăçан та ют ача вырăнне хунине курман – ун ăшши, хĕвел ăшши пек, пурне те çитетчĕ.

Тăван киле эпĕ шăматкун уроксем хыççăн таврăнаттăм. Вырсарникун каçпа вара эрнелĕх апата кутамккапа çакса каялла Арапуçне каяттăм. Эпир пурте пĕрле апатланаттăмăр, çавăнпа мĕн илсе килнине тӳрех Плаки инкене параттăм.

Анне мана хăш-пĕр кунсенче киле килме чарнăччĕ: çурхи шыв-шур вăхăтĕнче ("шыва путса вилĕн"), шартлама сивĕре ("шăнса вилĕн"), çил-тăман тулашнă чухне ("аташса кайăн") çула тухма юрамастчĕ. Çул нумайлăха хупăнсан Валерипе иксĕмĕрĕн ирĕксĕрех Плаки инке шучĕпе тăранса пурăнма тиветчĕ. Вăл мĕнле саплаштаркаласа пурăннине пĕлсе-курса тăраканскерсем, эпир хамăра аван мар туяттăмăр. Манăн анне, çавнашкал кунсем пуласса пĕлсе, мана малтанах канаш парса хунăччĕ: "Арапуçĕнче хатĕрлев кантурĕ пур. Унта Садри пиччен кĕçĕн ывăлĕ Абдулла ĕçлет. Йывăр пулса çитсен çавăн патне кайса кил". – "Ăна мĕн теес-ха?" – "Абдулла пичче, сывлăх сунатăп тесе çеç кала. Сана мĕн кирлине вăл хăех ăнкарать. Нумай пулмасть вăл пирĕн пата кĕрсе тухрĕ, эс ăçта вĕреннине, ăçта пурăннине ыйтса пĕлчĕ".

Пĕррехинче, çурхи шыв капланса килнĕ вăхăтра, эп çав кантура икĕ хутчен те кайса килтĕм. Вăл хупăччĕ. Анчах çав кунсенчех эпĕ шкултан килтĕм çеç, Плаки инке мана савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ:

– Пĕлетне, пирĕн пата кам килсе кайрĕ – хатĕрлев кантурĕнче ĕçлекен тутар! Кур-ха, мĕн илсе килнĕ вăл!

Пусăрăнчăк кăмăла пула хăш чухне куç умĕнчи илеме те туллин кураймастăн, халь акă хаваслантăм та çуркуннен ĕмĕрхи илемĕ – пур енчен те йăрăлтатса юхакан шыв, йăва çавăрмашкăн улăм пĕрчи, мамăк хыпса вĕçекен кайăксем – çĕнĕрен курăнса кайрĕ.

Абдулла пичче темиçе çавра çăкăрпа пĕр хутаç çăнăх илсе килнĕччĕ. Çăнăхĕ лăнкахчĕ.

– Халь ĕнтĕ чылайччен тытăнса тăрăпăр. Сире салма пĕçере-пĕçере парăп, – хĕпĕртерĕ Плаки инке. Вăл мана хутпа чĕркенĕ чăмакка тыт-

тарчĕ. – Çакна сана хăвнах пама хушрĕ. Лайăх вĕрентĕр терĕ.

Ятарласа ман валли хăварнă кучченеç – катăклă сахăр, тĕнчери чи тутлă çимĕç! – тăван кил саламĕ пекех пулчĕ: аслă піччĕшĕ кĕçĕн йăмăкне хăналать-çке!

– Вăл сире ăçтан пĕлет? – тĕпчерĕ Плаки инке.

– Вăл пирĕн хурăнташ! – мăнаçлăн хуравларăм эпĕ.

– Мĕнле вăл сирĕн хурăнташ пултăр: эпир чăвашсем, вăл тутар.

– Вăл – Садри пичче ывăлĕ, Садри пичче – ман Якур кукаçин шăллĕ.

– Мĕнле Садри? – шартах сикрĕ Плаки инке.

– Шăнкăртамри Садри!

– Шăнкăртамри Садри?! Ара хурах вĕт вăл! Лаша вăрри! Çаратуçă!

Çак сăмахсем – хама çине-çине пуçран çапнă пек! – мана анăратсах ячĕç. Эпĕ аран-аран хирĕçлерĕм:

– Çук, хурах мар... Çук, лаша вăрри мар... Çук, çаратуçă мар...

– Мĕнле çаратуçă мар? Хресчене лашасăр тăратса хăвар-ха... Пĕтĕм хуçалăх юхăнать.

Плаки инке ман çине шикленӳллĕн пăхса илчĕ те пукан лартса пачĕ:

– Лар-ха çакăнта. Ачам, эс пăтраштаратăн. Паллах, эс урăх Садри çинчен калатăн. Аннӳ килтĕр-ха, тĕплĕн ыйтса пĕлĕпĕр. Ку тутарĕ вара – лайăх çын. Сăн-питĕнченех курăнать – уçă кăмăллă, ырă!

## 3

Эпĕ те аннерен ыйтса пĕлесшĕнччĕ. Çавăнпа чăтăмсăррăн çул уçăласса кĕтрĕм. Шыв-шур иртсенех тăван яла çитрĕм. Çитнĕ-çитменех хамăн кӳренĕве пĕлтертĕм.

– Анне, Плаки инке пирĕн Садри пиччене "хурах", "лаша вăрри" терĕ. Ун пек мар вĕт?!

Эпĕ ĕнтĕ анне тарăхса кайса Садри пиччене хĕрӳллĕн хӳтĕлессе кĕтнĕччĕ. Анчах калаçу пачах урăх еннелле сулăнчĕ.

– Çапла çав... – терĕ анне шăппăн. – Чăнах, вăл лаша вăрри пулнă... Аслă, хăюллă, хастар... Пĕтĕм таврари яла сехĕрлентерсе тăнă, лашана кĕтӳренех тытса кайма пултарнă. Сыхла-сыхла, пĕрех тытрĕç ăна пирĕн арçынсем. Ăна ял варринче хĕнерĕç... Эп ун чухне вуннăраччĕ... – Тахçанхине аса илсе тепĕр хут сехĕрленнĕ евĕр каларĕ манăн анне. – Çакна хамăн куçăмпа курман пулсан пирĕн арçынсем çапла хĕненине ĕненмен те пулăттăм... – Анне хамăр ялсене тӳрре кăларма тăрăшрĕ. – Пĕр шутласан... Лашасăр юл-ха... Пĕтĕм хуçалăх хăрăнать... Çавах та... Мĕнле тискер... Ăна кунĕпе хĕнерĕç...

– Кайран мĕн пулчĕ?

– Пĕри ăна урипе тапса илчĕ те: "Кăнчĕ", – терĕ. Унтан пĕшкĕнерех пăхрĕ те сехĕрленсе ӳкрĕ: "Вăл вилнĕ!" Малтан пурте анраса хытса кайнă пек

пулчӗҫ, унтан тарма пуҫларӗҫ. Ӑна карта ҫумне, вӗлтӗрен тӗмӗсен хушшине сӗтӗрсе кайса пӑрахрӗҫ. Эп килелле чупрӑм. Кайран ун виллине пытарасшӑн пулнӑ терӗҫ, шыранӑ та – тупайман...

Эп ҫавӑн чухне пулни-иртнине май ҫитнӗ таран нумайрах пӗлесшӗнччӗ. Ҫавӑнпа тепӗр кунне аннен аппӑшӗ патне те кайса килтӗм, унран та ыйтаыйта пӗлтӗм.

Манӑн анне 1902-мӗш ҫулта ҫуралнӑ. Ҫав хӑрушӑ ӗҫе вӑл вуннӑра чухне курнӑ, апла ку 1912-1913-мӗш ҫулсенче пулса иртнӗ.

... Садрине тытни ҫинчен ялта пӗртен-пӗр ҫын – вӑрман хуралҫи Якур ҫеҫ – пӗлмен. Вӑл кунӗпе картунта пулнӑ, килне тӗттӗмленсе ҫитсен ҫеҫ таврӑннӑ. Килне ҫитсе хапхине уҫнӑ-уҫманах вӑл арӑмне тӗлӗнмелле хыпар пӗлтернӗ:

– Эпӗ такама турттарса килтӗм. Ҫыннине паллаймарӑм. Тискер кайӑк ҫурса пӑрахнӑ пулӗ.

Марье урапа патне пынӑ та кӑшкӑрсах янӑ:

– Ку Садри-ҫке!

– Мӗнле Садри?

– Шӑнкӑртамри Садри. Тытнӑ ӑна пирӗннисем, хӑрушла хӗнесе пӗтернӗ. Вилнӗ терӗҫ. Виллине пытарасшӑн пулнӑ та – тупайман. Апла ялтан шуса тухнӑ-ха вӑл... Тавах Турра, ҫынвӗлеренсем пулмарӑмӑр. Халь мӗн тумалла ӗнтӗ?

– Мӗн "мӗн тумалла"? Пулӑшмалла. Вӑл – ман тӑван. Эп ӑна пулӑшма тивӗҫ.

– Мӗнле сан тӑван?

– Эп вӑрмантан тухнӑччӗ, Хытанапа пыраттӑм. Лаша пӗр тӗлте хартлатса илчӗ те малалла каясшӑн мар, каялла чакать. Лав ҫинчен анса пӑхрӑм та – ҫул хӗрринче такам выртса парать. Эп асӑрхамасӑрах иртсе каяттӑм пулӗ, юрать-ха лаша сисрӗ. Ҫынни хӑрӑлтатма пуҫларӗ. Мана хам ача чухне пӗр ҫулҫӳренрен илтни аса килчӗ: сӳнекен ҫулӑм ҫине вӗрсен вӑл ҫӗнӗрен амаланнӑ пек, хӑрӑлтатакан ҫынна ҫӑварӗнчен сывлӑш вӗрсе кӗртсен вӑл тикӗс сывлама пуҫлать тет. Эп ҫапла турӑм та: ҫӑварне шӑлса хам сывлӑша вӗрсе кӗртрӗм. Ҫулҫӳрен: "Ҫав икӗ ҫын тӑвансем пулса тӑраҫҫӗ", – тенӗччӗ. Апла эпир Садрипе иксӗмӗр тӑванлашрӑмӑр. Вӑл манран кӑшт кӗҫӗнрех пулас, апла шӑллӑм пулать. Халь тем те сиксе тухма пултарать. Вӑл пирӗн патӑртине никам та ан пӗлтӗр. Хамӑр ачасем те ан пӗлччӗр, хальлӗхе вӗсем картунтах пулччӑр. Атя ӑна мунчана вырттарар. Эс часрах шыв ӑшӑт, сиплӗ курӑкусене хатӗрле.

Вӗсем мунчара краҫҫын лампи ҫутнӑ, аманса пӗтнӗ ҫынна ҫавӑнта йӑтса кӗрсе вырттарнӑ. Суранӗсене ҫуса ҫыхнӑ чухне Садри тӑна кӗнӗ те: "Эп ӑҫта? Эсир камсем?" – тесе ыйтнӑ. "Эс тӑвану патӗнче, – хуравланӑ Якур.

– Эс ан хăра. Сана кунта никам та тивмест. Эпĕ халь Шăнкăртама каятăп. Арăмна: "Упăшку чĕрĕ-сывă", – тейĕп. Эс ман арăма итле – вăл темле эмелçĕрен те ирттерет".

Вăрçă-харçă ан тухтăр, тутарсем Садрине шырама ан пуçлаччăр тесе ун арăмĕпе тĕл пулмашкăн Якур çĕр варринче Шăнкăртама тухса кайнă. Каллĕ-маллĕ унăн 32 çухрăм утмаллаччĕ.

Каялла вăл тул çутăласпа çаврăнса çитнĕ. Килĕнчен кайнăранпа ăна пĕр ыйту – сӳнмесĕр тĕлкĕшекен кăвар тейĕн! – канăç паманччĕ.

– Чĕрĕ-и? – ыйтнă вăл арăмĕнчен çитнĕ-çитменех.

– Чĕрĕ, – хуравланă Марье. – Шăнкăртамра мĕнле?

– Чиперех. Арăмĕ шуйханса ӳкнĕччĕ. Эп хапхи патне çитрĕм çеç – сĕм çĕрле вĕт! – шаккамарăм та, вăл: "Кам унта?" – тет. "Çĕньял чăвашĕ. Мана кунта упăшку ячĕ", – терĕм çеç, хапхине уçрĕ те: "Вăл чĕрĕ-и?" – тет. "Мĕн пултăр ăна? Чĕрĕ, сывă, кăшт чирлерĕ-ха", – тетĕп. Вăл: "Садри нихăçан та чирлесе курман, чирлемест те. Тӳррине кала!" – тет. Хăй çинçешке кăна та, питĕ хăюллă, витĕр курать, ăна суеçтерме çук, ирĕксĕрех тӳррине калама тиврĕ. Каларăм та – тӳрех Çĕньяла кайма пуçтарăнчĕ. Аран ӳкĕте кĕртрĕм: "Эс Шăнкăртамрах пул, сăнасах тăр, кунта нимĕнле шăв-шав та ан тухтăр. Упăшкушăн ан хăра: ман арăм тĕлĕнмелле эмелçĕ – чĕртет ăна. Сăмах паратăп: Садрине икĕ кунран килнех илсе çитерĕп". Пĕлетне, мĕскер терĕ вăл? "Курăн-ха, Садри санăн юратнă шăллу пулĕ. Вăл – тĕнчери чи ырă, чи шанчăклă çын", – терĕ.

– Арăмĕ Фатима ятлă-им? – ыйтнă Марье.

– Аха. Эс ăçтан пĕлен?

– Садри вĕçнех çитнĕччĕ. Çавăн чухне "Фатима! Фатима!" тесе чĕнме пуçларĕ. Те тархаслать ăна, те сывпуллашать унпа. Сасси чуна çӳçентерет. Эп пуçне çĕклесе тытса тăтăм. "Фатима килет! Фатима килет! Сывал, сывал, санăн ăна кĕтсе илес пулать! Фатима килет!" – терĕм. Вăл куçне уçрĕ те пăшăлтатса илчĕ: "Фатима килет!" Вăл çав самантра хăтăлса юлчĕ. Паянхи куна аван кунласан – юсанать.

– Юсанмалла, – тенĕ Якур. – Урăхла пулма пултараймасть. Кĕрем-ха ун патне. "Фатима сансăр пурăнаймасть. Сана икĕ кунран килнех çитеретĕп тесе сăмах патăм ăна. Сăмахăм суя ан пултăр – сывал, шăллăм!" тейĕп.

– Кĕр, кĕр, вăл сана куç пек кĕтет. Анчах нумай калаçма ан пар. Вăйсăрха вăл. Хальлĕхе ăна пĕччен хăварма та юрамасть.

Халь ĕнтĕ мунчара çеç мар, пăлтăрĕнче те çутă çуннă. Пĕр сакки çинче тĕрлĕ эмел тултарнă сӳленккесемпе чӳлмексем ларнă. Тепĕр сак çинче кĕтесре çытарпа витĕнчĕк выртнă – Марье çакăнта çĕр каçнă ĕнтĕ. Сиплĕ курăксен шăрши сарăлнă. Çĕрĕпе куç хупман вăрман хуралçипе унăн арăмĕ Садрине ура çине тăратмашкăн темле майпа та, тем таранччен те пулăшма хатĕрччĕ.

## 4

Икĕ кунран Якур Юхма пасарне кайма пуçтарăнчĕ. Уксахласа та пиччĕшĕ çумне тĕршĕнсе Садри урапа патне хăех çитрĕ. Ăна урапа çине вырттарса ун тавра хурăн милĕкĕсем сарса-купаласа хучĕç. Вĕсен хушшине Марье тĕрлĕ им-çам тултарнă пысăк карçинкка вырнаçтарса лартрĕ. Лава çиелтен шăлапирпе витсе çыхрĕç те  Якур тĕттĕмлех тухса кайрĕ. Пасара Шăнкăртам витĕр каймаллаччĕ. Якур тӳрех Садри çурчĕ енне çул тытрĕ.

Килне вăл питĕ кăмăллăн таврăнчĕ. Ăна кĕтсех тăракан Марье пурне те пĕлесшĕнччĕ:

– Мĕнле çитрĕр? Садри лав çинчен хăех анчĕ-и? Фатимапа иккĕшĕ мĕнле тĕл пулчĕç?

– Ун пек çулçӳрев ĕмĕрте пĕрре пулать. Тен, пулмасть те. Эп хирте пĕр-ик тĕлте чарăнса лава тĕрĕслерĕм: "Садри, эс мĕнле унта?" – тетĕп. "Яхшы! Атя малалла вĕçтеретпĕр!" – тет. Вĕçтертĕмĕр, çитрĕмĕр. Лав çинчен хăех анчĕ. Ăна витĕрех хурăн шăрши çапнăччĕ. Эх, санăн Фатимапа иккĕшĕ тĕл пулнине курасчĕ!.. Вĕсем пĕр-пĕринсĕр пурăнаймаççĕ пулĕ... Фатима карçинккуна каялла тавăрса пачĕ, унта сан валли пĕр япала пур.

Шăнкăртамсем карçинкка тулли тем-тем тĕрлĕ кучченеç парса янă-мĕн. Марье çиелтех выртакан чĕркеме салтрĕ те чечек çыххи евĕр курăнакан япалана сарса хурсах тишкерчĕ:

– Ĕнтĕ ку илеме пысăк уявра çеç çыхса çӳрĕп, – терĕ вăл кăмăллăн.

Хитре парнене Якур та пырса пăхрĕ:

– Фатима "Ку перс шаль тутăрĕ" терĕ. Пĕлетне, вĕсем сана "табиб"* теççĕ. "Тухтăр" тени пулать ку.

– Сывлăш вĕрсе кĕртекеннине мĕнле чĕнеççĕ?

– Ăна "Ягур абый"** теççĕ. Ку "Якур тете" тени пулать.

Вăрман хуралçипе арăмĕ ăшшăн кулса илчĕç. Хăйсем иккĕшĕ те питĕ шухăшлăччĕ.

– Пирĕн ĕç вĕçленмен-ха, – терĕ Якур.

Арăмĕ вăл мĕн пирки пăшăрханнине тӳрех ăнкарса илчĕ.

– Çапла çав, – терĕ Марье. – Яла Садри чĕррине пĕлтерес пулать. Халăх асапланать. Пурте пĕлетпĕр-çке: тахçан-авал пирĕн ялта пĕр çынна вĕлернĕ. Халăх асне кĕрсе юлнă çав тискер ĕç, тума юраман ĕç. Ăруран ăрăва аса илтерсех, асăрхаттарсах тăнă унашкал тума юраманни çинчен. Масар тĕлĕпе вăрмана кайнă чухне мана çакăн çинчен асатте те, аттеанне те каласа панă. Эпир пурте çапла ӳснĕ. Хамăр акă мĕн туса  хутăмăр. Сĕмлĕхе лекрĕмĕр. Çынсем урама тухма та, хире кайма та хăраççĕ. Халь-

*табиб (тутар.) – тухтăр
*абый (тутар.) – пичче

халь тӳре-шара çитесрен, е тутарсем вăрçăпа килесрен сехĕрленсе тăраççĕ. Сĕмлĕхрен кăларас хамăр халăха.

– Эпĕ те çавăн çинчен шухăшлатăп-ха... Мĕнле тумаллине пĕлместĕп-ха... – терĕ те Якур самантран хавхаланса кайса хушса хучĕ. – Итле-ха, пирĕн кӳршĕ арăмĕсенчен чи шапăлкки хăшĕ-ха? Кайса кил-ха çавăн патне – тăвар е шăрпăк ыйтма. Сăмах май: "Якур пасара кайса килчĕ. Питĕ ăнăçлă пулса тухнă: пĕтĕм таварне курттăмăнах Шăнкăртамри Садри туяннă", – тесе  кала ăна.

Çийĕнчех пĕтĕм ял хускалнă. Çĕньял арçыннисем хăшĕ пĕрерĕн, хăшĕ иккĕн-виççĕн те Якур патне васканă. Кĕçех унта пӳрт тулли халăх пуçтарăннă. Пурте пасарти лару-тăрăва пĕлесшĕн: хурăн милĕкне кăçал мĕн хакпа сутаççĕ-ши, тавар туянаканĕсем пĕлтĕрхи пекех чăркăш-и е кăштах йăвашланнă-и?

Якур тĕплĕн каласа панă:

– Ман хаксене пĕлме вăхăт та пулмарĕ. Çитрĕм çеç, сутуçсен ретне те вырнаçайманччĕ, ман лав патне Шăнкăртамри Садри пырса тăчĕ. Пуçне тӳрех ман милĕксен хушшине чикрĕ, нăш-нăш шăршлать, "Яхшы!" та "Яхшы!" тет. Унтан çулама пуçларĕ. Çулать те çулать!

– Мĕн çулать?

– Милĕк çулçисене çулать.

– Мĕн, мĕн çулать? – те аптăраса кайса, те сехĕрленсе ӳксе ыйтрĕç тăванкассем.

– Милĕк çулçисене çулать!

– Пĕтрĕмĕр... Пуçĕнчен лектернĕ... – терĕ пĕри урмăшнă сасăпа.

Якур сăмаха малаллах тăснă:

– Пĕр милĕкне çуласа пĕтерет те айккине хурать, унтан тепĕр милĕкне çулать, ăна та айккинелле хурать, хăй вĕçĕмсĕр "Якши!", "Якши!" тет.

– Чăнах, ухмаха тухнă... Ай инкек...

Якур патне çап-çутă сăн-питлĕ пырса кĕнĕ çынсем туххăмрах шанчăка çухатнă, ĕшенсе çитнĕ евĕрлĕ пулса кайрĕç.

Якур васкаман-ха:

– Çуларĕ-çуларĕ те: "Пĕтĕм таварне туянатăп!" – терĕ. Укçине çавăнтах кăларса пачĕ. Лайăх тӳлерĕ. "Лавна каялла çавăр!" – тет. Вăшт кăна манпа юнашар ларкăч çине ларчĕ те ман тилхепене хăй аллине илчĕ, ĕнтĕ ман лашана тытса пырать. Хăй картишнех илсе кĕчĕ. Хĕпĕртенĕ туяннă таваршăн, калаçа-калаçа лава пушатать. "Мунчара шăпах çакăн пек милĕкпе çапăнмалла. Çакнашкал милĕке пĕçеретĕн çеç, меслетсĕр тутлă шăршă сарăлать. Икĕ шăршă: лантăш тата хурăн шăрши. – Ман çине тĕсесе пăхса илчĕ те: – Эс лантăшла хурăнпа ахаль хурăна çиелтен пăхсах уйăратăн пулĕ-ха", – тет. Эп нимĕн те ăнланаймарăм – мĕнле лантăш çинчен кала-

çать ку этем. Çавах та: "Паллах, уйăратăп, эп леçник-çке", – тетĕп. Вăл: "Эп уйăраймастăп, маншăн пулсан пур хурăн та пĕрешкел. Вĕсен вара пĕр уйрăмлăх пур: лантăшла хурăнăн çулçи яка, ахаль хурăнăн çулçи яка мар, шатрашка. Çавăнпа милĕк туяннă чухне çулçисене çуласа тĕрĕслемелле", – тет.

Ĕшеннĕ пек ларакан халăх чалл çуталса шав шавласа кайрĕ:

– Сывах вăл! Сывах!

– Вăл кирлĕ тавара суйланă!

– Тавар пахалăхне тĕрĕсленĕ!

– Мĕнле ăслă, э? Тавара çуласах пăхать!

Каçса кайсах, ахăлтатсах кулнă халăх.

– Якур, итле-ха, эс çав лантăшла хурăн çинчен пĕлмен-и?

– Пĕлмен! Пĕлнĕ пулсан çапла сехĕрленеттĕм-и?

– Эс те хăраса ӳкрĕн-и?

– Пуç тӳпинчен сĕрĕм тухса кайрĕ: йĕркеллĕ çынах пĕтрĕ иккен терĕм.

– Эпир мĕн тесе... вăл ăсран тайăлнă тесе...

– Ман çӳç чашăлл! вирелле тăчĕ. Хăйне шалккă пулса кайрĕ...

– Эпĕ те шеллерĕм: çынах вĕт, ухмаха тухнăскер мĕнле пурăнĕ ĕнтĕ терĕм... Ачи-пăчи мĕн куратчĕ-ха тата?

– Манăн та чĕре шӳлесе кайрĕ... Ухмаха тухнăскер ялтан яла сулланса çӳретчĕ-ши?..

– Çавах та тутарсем тĕлĕнмелле халăх, пур çĕре те пуçне чикеççĕ. Эпир – вăрманьенсем – хамăр вăрманта мĕнле йывăç ӳснине пĕлместпĕр, вĕсем – хирьенсем! – пирĕн вăрмана çулçи таран пĕлеççĕ.

– Пултăрах! Çапăнччăр ĕнтĕ пирĕн милĕкпе, хĕртĕнччĕр лайăххрах, çылăхĕсенчен тасалччăр! – терĕ те пĕри хавассăн, халăх тепĕр хут шавласа кулса ячĕ. Темиçе кун хушши тискерлĕх танатинче пулнăскерсем халь акă хăрушлăхран хăтăлса йĕркеллĕ пурăнăç илемĕпе киленсе савăнчĕç, хĕпĕртенчĕç. Пĕтĕм ял арçынни (ватти, çамрăкки) нихăçан та çапла пĕрле пуçтарăнса кулман пулĕ. Вĕсем килĕсене саланнă чухне те урам тулли кулса-шавласа пычĕç...

Çĕньял арçыннисемшĕн пасар çинчен çеç калаçни çителĕклĕ пулмарĕ. Вĕсем халь Садри çинчен нумайрах пĕлесшĕнччĕ. Паллах, вĕсем Садри яла мĕнле сăтăр тунине астăваççĕ. Анчах та вĕсем халĕ ун çинчен ыррине çеç илтесшĕнччĕ. Вĕсен Садрине... тав тăвас килетчĕ... Вилменшĕн. Чĕрĕ юлса, ял варринчех сыхласа тăракан тискерлĕх – çынвĕлерӳ – серепинчен хăтарнăшăн... Халăха сĕмлĕхе путма паманшăн...

Каçалапа Çĕньял арçыннисем Якур патне тепĕр хут пуçтарăнчĕç. Калаçăва чи асли хускатрĕ:

– Якур, каласа пар-ха пире çав Садри çинчен. Эс ăна куркаланă ĕнтĕ –

тутарсем вăрман касма килкелесех тăраççĕ, пирĕн картунтах пурăнаççĕ ун чухне. Мĕнлерех çын вăл, çав тутар?

Ку калаçу Якура хăйне те кăмăллăччĕ. Вăл хаваслансах каласа пачĕ:

– Лутрарах кăна тутар вăл. Хăй патвар, вăр-вар та вашават. Ун çывăхне пыма шиклĕрех те – унран хĕм тапса тухассăн туйăнать. Калаçнă чухне унăн куçĕсене курма тăрăшмалла. Унăн куçĕсене курсан пĕтĕм шиклĕх сирĕлет те çав тери унпа калаçас килсе каять.

– Апла ырă çын вăл.

– Тата хăюллă.

– Тата шанчăклă.

– Ун пек çынна "джигит" теççĕ, – хушса хучĕ анлă пĕлӳллĕ учитель.

– Шăп çавă, шăп çавă! – хĕпĕртерĕ Якур кирлĕ сăмах тупăннăшăн. – Унпа калаçма питĕ çăмăл – унра суя çук. Шанчăклă. Çакăн пек тус пулсассăн пурăнма та çăмăлрах. Мĕнле тараватхуçа тата!

– Эс ăçтан пĕлен?

– Пĕлмесĕр! Лава пушатсанах эпĕ киле каясшăнччĕ. Ямасть. "Çапла инçе çул хыççăн выçăлла кăларса ямастăп ĕнтĕ сана", – тет. Пӳртне илсе кĕчĕ. Тĕлĕнмелле хăтлă кил-çурт. Ун пек килте шăрăхра – сулхăн, сивĕре ăшă ĕнтĕ. Куçа та хавас, кăмăла та ырă.

– Кил-çурт тирпейĕ вăл хĕрарăмран килет.

– Эс майрине куртăн-и? – кăртах сиксе илчĕ Çĕньялти чи илĕртмĕш каччă. – Мĕн ятлă?

– Фатима ятлă. Тӳррĕн пăхма çук – куçа шартать. Айăккăн кăльт пăхса илтĕм: куçĕ – хура хурлăхан, пичĕ – анис улми, çӳçне хупланă, перс шаль тутăрĕ çыхнă. Эп çакна асăрхарăм тата: упăшки ун çине пăхнă чухне сухалне шăлкаласа илет.

– Кăмăлне çавăрасшăн... – мăкăртатса илчĕ илĕртмĕш. – Ачисем пур-и?

– Эп курмарăм та. Унта çирĕп йĕрке: ачипчи хăна урисене чăлхантарса чупса çӳремест. Анчах кашни кĕтесрен хура куççем йăлтăртататчĕç. Вĕсен килĕнче мана пуринчен ытла сĕтел-пуканĕ тĕлĕнтерчĕ. Йăлтах касса-шараçласа тунă! Шкапĕ мĕнлерех! Эпĕ ĕнтĕ "ку чаплă япаласем патша керменĕнчен лекмен-ши" тесе те шухăшларăм. Çакна Садри хăй аллипе ăсталанă иккен. Пулаççĕ-çке çавнашкал ăстасем...

– Вăл ăста платник тенине эпĕ те илтнĕ-ха...

– Якур, кала-ха: сăмах май вăл пирĕн яла асăнмарĕ-и?

– Сăмах май асăнмарĕ. Ятарласа асăнчĕ.

Итлекенсем пĕр-пĕрин çине кăнн-канн пăхкаласа илчĕç.

Яланхи пекех Якур тĕплĕн хуравларĕ:

– Садри: "Хисеплетĕп çав яла. Пирĕн таврари чи лайăх ял вăл. Халăхĕ мĕнлерех! Ырă кăмăллă, ĕçчен", – терĕ.

– Тăрăхлать пире... – терĕ пĕри аптăранă енне.

– "Лайăх" тени тăрăхлани пулать-и? – хивреленчĕ Якур. – Пирĕн çинчен мĕнле урăхла калаятăн? Эпир, мĕн, вĕлеретпĕр-и, çарататпăр-и?

– Паллах, ун пек мар, çавах та...

– Мĕншĕн "çавах та"? Эпир, мĕн, вĕчĕллĕ çынсем-и, элекçĕсем-и, çынсене усал сунатпăр-и?

– Ун пек мар, паллах, эпир яланах ырă сунатпăр.

– Эпир, мĕн, кахалсем-и? Çын шучĕпе пурăнатпăр-и?

– Паллах, ун пек мар, иртен пуçласа каçчен шараçланатпăр.

– Садри пирĕн çинчен тĕрĕс каланă вĕт!

– Вăл ăслă.

– Ырă. Вĕчĕ тытмасть.

– Çаплине çапла та-ха, – хашлатрĕ Якур. – Анчах ку тутар мана шар кăтартать-ха – вăл çав лантăш-хурăн милĕкне тата çĕр мăшăр хатĕрлесе пама ыйтрĕ. Халь манăн мĕн тумалла тет? Леçник пуçăмпа вăрман тăрăх йывăççем çуласа çӳремелле-и?

Юлашки кунсем çĕньялсен пĕтĕм сисĕм-туйăмне çивĕчлетрĕç пулас, ахăртнех, вĕсем пурте хисеплекен вăрман хуралçи чĕлхине тăсса пĕр хурăн патĕнчен тепĕр хурăн патне чупнине аванах сăнарларĕç, – халăх тепĕр хут шав кулса ячĕ. Пĕр Якур çеç кăмăлсăр ларчĕ.

– Якур, ан çиллен ĕнтĕ – пирĕн яла çапла хисеплекене савăнтар! – терĕ пĕр шăлйĕренĕ аран-аран сывлăшне çавăрса ярса. – Ытах ху ерçейместĕн пулсан ак эртелĕпе каятпăр та пĕр лав хуçса килетпĕр!

– Ара! Çапăнтăр, хĕртĕнтĕр пирĕн милĕкпе, тасалтăр çылăхĕсенчен!

Якур, хăйне тăванкассем пулăшма хатĕр иккенне пĕлсен, лăштах сывласа ячĕ...

Икĕ кунран Марье Шăнкăртама кайма пуçтарăнчĕ: вăл Садришĕн пăшăрханатчĕ, унăн суранĕсем мĕнле тӳрленнине тĕрĕслесшĕнччĕ. Лашине кӳлчĕç те вăрман кучченеçĕсем тата каллех карçинкка тулли сиплĕ курăк илсе Якурпа Марье ир-ирех тухса кайрĕç. Унта çитсе Садри çурчĕ умĕнче чарăнчĕç çеç: "Якур абый килчĕ!", "Якур абый килчĕ!" – чăнкăлтатрĕç ачасен сассисем.

Садри вăрман хуралçипе унăн арăмне кĕтсе илме пĕтĕм кил-йышĕпе тухрĕ. Якурпа Садри пĕр-пĕрне ыталаса илчĕç, вĕсен арăмĕсем вара темĕншĕн куççульне шăла-шăла ыталашрĕç.

... Вĕсем ку килте чылайччен пулчĕç. Марье – пĕччен мар ĕнтĕ, Фатимапа пĕрле – Садрин кашни суранне пăхса тухрĕ, унтан паян илсе килнĕ курăксенчен вĕсем иккĕшĕ çĕнĕ им-çам хатĕрлерĕç. Виçĕ пĕчĕк ача (икĕ арçын ача та пĕр хĕрача, çул сиктермесĕр çуралнăскерсем пулмалла), хăйсен ашшĕ хăйсен амăшне "табиб – чăн-чăн асамçă" тенине илтнĕскерсем, Марье хыççăнах çӳрерĕç: çывăхах пырса тăраççĕ те никама чăрмантар-

масăр, шавламасăр вăрман хуралçин арăмĕ çинчен куç илмесĕр пăхса тăраççĕ.

Уксахласа та пулин, Садри Якура хăйсен садне илсе тухрĕ. Унти йывăçсене пăхса тухсан вăрман хуралçи хуçана ырларĕ те, канаш та пачĕ:

– Кăмăлу пулсан, иксĕмĕр кĕркунне хăш-пĕр тĕмсене урăх çĕре куçарса лартăпăр, тата ачасем валли ир ĕлкĕрекен йышши улмуççисем лартăпăр, – терĕ.

Садри хуравламарĕ-ха. Çĕньялта пулса иртнĕ ĕçсем хыççăн вăл питĕ сахал калаçатчĕ. Ун чун-чĕрине сăмахпа калайми хăват тулнăччĕ. "Тав" ятлă хăват. Якур мунчинче тăна кĕрсен вăл чи малтан хăй çине питĕ çывăхран та тимлĕн пăхакан икĕ кăвак куçа курнăччĕ. Çав куçсем: "Ан хăра – эс тăвану патĕнче. Сана кунта никам та тивмест", – тенĕ пек туйăнчĕ ăна. Тăванлăх ăшши – хӳтĕлекен вăй! – тӳрех çитрĕ унăн чĕрине, унăн аманнăсусăрланнă кĕлеткине. Кайран вăл çыннине курчĕ – хура çӳçлĕ, кăн-кăвак куçлă чăваш. Çав самантран пуçласа пурăнать Садри чунĕнче, ӳт-тирĕнче, шăммисенче ăшă хум – пурăнăç тăршшĕпех пĕр чарăнмасăр тапакан чĕре евĕр яланах чĕрĕ вăл. Çав туйăма сăнарлама хатĕр сăмахсем те пур: "Эп сана чунтан-вартан тав тăватăп", "Эс мана ырă тунине эпĕ нихăçан та манассăм çук". Садри пĕлет çав сăмахсене. Анчах ун пек калаймасть – çакă вăй-халлă сăмахсем те ун чĕринчи хăвата туллин кăтартаймаççĕ пек. Халь садра тăракан икĕ хресчен – тутарпа чăваш – çĕр ĕçĕ çинчен калаçнă май Садри пĕр шухăшламасăр каларĕ те хучĕ:

– Тете, ман пур ĕçе те эс каланă пек тăвас килет.

Пуплевĕ янăравлă та мар, сăмахĕсем те ансат, "ахаль" сăмахсем çеç, темле пуклак сăмахсем кăна. Анчах та Садрине çăмăл пулса кайрĕ, вăл хăй те туйса илчĕ – тупăнчĕ унăн каламалли сăмахĕ. Каламалли сăмахĕ тупăнчĕ те, чĕлхи те "уçăлчĕ". Халь ĕнтĕ тем те калама пулать пиччĕшне: "ахаль" сăмахсене те вăй кĕчĕ. Чун управăшне хĕвĕннĕ тавĕ сад уçлăхне хумлăн-хумлăн сарăлса, унти сывлăшпа хутшăнса таврана ырăлатрĕ.

Якур Садри çине тĕлĕнсе-е-е пăхса илчĕ те:

– Якши-и-и... – терĕ.

Эмелçĕ ĕçĕнчен пушансанах "асамçă табиб" ялан хăй çывăхĕнчех тăракан виçĕ ачана пĕрерĕн-пĕрерĕн çĕклесе çурăмĕнчен лăп-лăп туса ачашларĕ.

... Кайран вĕсем пысăк пӳлĕмре хăналанчĕç. Якур тараватъ хуçасене тав турĕ. "Пире хăналакан тутлă çимĕçпе сĕтелĕр урисем тайăлаççĕ" тесе чăвашла каларĕ те хуçасем çакна тутарла куçарса пама ыйтрĕç. Çурри чăвашла, çурри тутарла калаçса та пурте пĕр-пĕрне лайăх ăнланчĕç. Чĕлхи "уçăлнă" Садри Фатимана савăнтарас тесех чăвашла кĕскен кăна каланă сăмаха анлăрах куçарса пачĕ. Фатима ĕнтĕ йăл та йăл кулса, "Рехмет" те "Рехмет" тесе çеç тăчĕ.

... Килне кайма тухсанах Якур "табибран" Садри сывлăхĕ çинчен пĕлесшĕн пулчĕ:

– Мĕнле-ха пирĕн Садри? Хытах уксахлать-çке...

– Çавнашкал аманнă хыççăн тепри ĕмĕрлĕхе сусăрланса юлать. Ку утакан та пулнă, кĕçех чупма пуçлать. Ним хăрамалли те çук – Фатима пĕлет мĕн тумаллине.

– Итле-ха, Марье, пирĕн кил-йыша чăн-чăн шăллăмăр хутшăнчĕ вĕт!

– Чăн-чăн йăмăк та...

## 6

Çĕньялсем тем тĕрлĕ те шухăшлатчĕç-ха: Садри, çавнашкал аманса пĕтнĕ çын, мĕнле майпа Шăнкăртама çитнĕ-ха?

Кĕçех çакна тĕплĕн каласа паракан тупăнчĕ. Вăрманкасра хĕрринчи килте пурăнаканĕ каласа пачĕ:

– Çав кун çĕр варринче пирĕн хурсем урăм-сурăм какăлтатса илчĕç. Тухса пăхрăм. Никам та курăнмарĕ. Çутăласпа каллех какăлтатаççĕ. Тепре тухса пăхрăм. Ак тамаша! Пирĕн пахча вĕçĕнчен такам вăрман еннеллеваскать. Уксахлать, хăй пĕрех хăвăрт утать. Эп шутламан та çав çын Садри пулма пултарни çинчен. Вăл çын умне курăнас темен ĕнтĕ – пичĕ-куçĕ чиперех пулман-тăр. Çавăнпа вăрман хĕррипе каяс тенĕ. Лантăш-хурăн айĕнче канакана, çырла ваййи хушшипе утса, вăрманти çăлкуççенчен ĕçсе, хăйĕн Фатимушки патне çитиччен йăлт тасалса кайнă, унччченхинчен те хитререх пулса тăнă.

– Арçынна ытла хитре пулни килĕшмест, – тиркешнĕ Çĕньял илĕртмĕшĕ.

Çынвĕлеренсен шутĕнче шутланнă чухне, хăрушă хаса çитессе кĕтнĕ чухне çĕньялсен чун-чĕри мĕнлерех кисреннĕ пулĕ, хатарлăх епле алланă, виçнĕ пулĕ вĕсен ăш-чиккине... Çынни вилменнине пĕлчĕç те, вĕсен ăшĕнчен темĕн чухлĕ кирлĕ марри тухса ӳкрĕ, тĕттĕм çĕртен, чулсен хушшинчен тухнă таса калча пек çиеле ырри тапса тухрĕ. Ахăртнех, тутарсен шухăш-кăмăлĕ те çавăн евĕрлех пулнă, вĕсен чăвашсене тав тăвас килнĕ – вĕлермерĕç-çке чăвашсем вĕсен çыннине. Икĕ енĕ те – чăвашĕсем те, тутарĕсем те – çавăн чухне пĕр-пĕринче лайăххине çеç курнă, вĕсен пĕр-пĕрне пулăшас килнĕ. Чăн-чăн савăнăç кӳнĕ вĕсене çавнашкал шухăш-туйăм.

Юхма пасарĕнче пулнă çĕньялсем унта Садрине курнă пулсан çакăн çинчен хавхалансах каласа панă.

Акă пĕр чăвашĕ халаплать:

– Эпĕ Юхма пасарĕнче пултăм. Хăмăт кирлĕччĕ. Ут тавраш сутакансен ретне пытăм çеç – ак сана! – унта Садри чаплă купса пек тăра парать! Тӳпеттейне те ылтăнпа тĕрленĕ, чăлт та чăлт çуталса илет.

– Фатима тĕрленĕ пуль... – ăмсанса илнĕ илĕртмĕш.

– Садрин тавар нумайччĕ. Хăмăт та пурччĕ. "Мĕн хакпа сутатăн?" – тетĕп. Хаклă ыйтать.

– Ара ун таварĕ те чаплă! – тӳрех Садри майлă пулнă темиçе çын.

– Чăнах, таварĕ чаплă. Хакĕ те аванах. Сутуçă эпĕ иккĕленсе тăнине курса ыйтать манран: "Хăш ялтан-ха эс?" Эпĕ: "Çĕньялтан", – тетĕп. Этем çуталсах кайрĕ: "Ă-ă! Ма тӳрех каламарăн? Сана акă чи лайăххине суйласа паратăп, ĕмĕрĕпе мана асăнса пурăнăн". Эп шикленсех ӳкрĕм – мĕн суйласа парасшăн вăл, нухайккине кăларса пасар варринчех сӳсе илесшĕн-и мана? Вăл пĕр хăмăтне ман паталла шутарчĕ, тавар хакне шăп çурри таран чакарчĕ те: "Ил-ил! Кунашкал хăмăт хамăн та çук!" – тет. Таварĕ вара – ше-е-еп!

– Малашне ĕнтĕ унран туянăпăр!

– Паллах!

Чаплă хăмăт туяннăскерĕ калаçăва малалла тăсать:

– Унта ман хыçра тепĕр çын тăратчĕ. Çавă эпĕ мĕн чухлĕ тӳленине курчĕ те Садрине çавăн чухлĕ укçа кăларса пачĕ.

– Ах çыпçăнчăк, э?

– Садри ăна та çав хакпах сутать-ши? Шар курать вĕт ырă этем!

– Асту! Укçине васкамасăр шутларĕ те: "Тата çакăн чухлĕ хушас пулать!" – терĕ. Лешĕ: "Эс çак çынна çапла сутрăн-çке". – "Эс унпа ан танлаш. Вăл – тĕлĕнмелле ял çынни". – "Питех мĕнле ял вара вăл?" – "Унта чи ырă çынсем пурăнаççĕ. Ман унран пĕр пус та илмелле марччĕ те-ха, укçи кирлĕ, çавăнпа çуррине те пулин илес терĕм".

– Садри темерĕн! Пире мĕнле чыслать!

Тĕлĕнмелле ял çынни хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерсе каланă:

– Манпа çавнашкал уçă кăмăллă пулнăшăн манăн ăна мĕн те пулин парнелессĕм килет... Тулькăш мĕн парнелемеллине пĕлместĕп... Унăн пĕчĕк ачисем пур-ши?

– Пур. Якур "унта кашни кĕтесрен хура куçсем йăлтăртатаççĕ" терĕ.

– Апла вĕсене шăхличсем туса парăп: çăкаран та, йăмраран та туса парăп.

Тăванкассем ун шухăшне ырланă:

– Тĕрĕс, тĕрĕс! Питĕ лайăх парне пулать! Шутлăр-ха, урампа пĕр ушкăн пырать. Малта – Садри, ун хыççăн – ачипчи, пысăкраххисем те, пĕчĕкреххисем те – пĕр кĕтӳ. Пурте шăхлич каласа пыраççĕ.

– Фатима ăçта? – хыпăнса ӳкнĕ Çĕньял илĕртмĕшĕ.

– Вăл крыльца çинче тăрать. Хăйĕн мусыкканĕсене кĕтсе илме тухнă. Телейлĕ питĕ – йăлкăшса çеç тăрать.

– Ух! Чи кĕçĕнни утма та вĕренсе çитеймен, тайкаланса кăна пырать, хăй пуринчен хытăрах шăхăртать!

Юлашки кунсенче кирек хăш самантра та кулма хатĕр çынсем лăхлатса кулса янă...

Тепĕр чăвашĕ каласа парать:

– Эп Юхма пасарне кайрăм. Шăнкăртам хушшипе пыратăп. Садри килĕ тĕлне çитрĕм. Çурчĕ – кермен пек. Ха, хуçи çурт çумне чикмек таянтарнă, чикмек çинче тăрать, чӳрече хашакĕсене сăрлать. Симĕс тĕспе.

– Тутарсем симĕс тĕсе килĕштереççĕ çав.

– Эпир сарă тĕсе юратнă пек вĕсем симĕс тĕсе юратаççĕ.

– Чӳречи хашакĕсем чĕнтĕр пек. Ытараймасăр пăхса тăратăп. Хăйĕн ĕçне такам пăхса тăнине çурăмĕпе сисрĕ пулĕ, пуçне пăрчĕ те: "Илемлĕ-и?" – тесе ыйтать. "Илемлĕ", – тетĕп. "Пасара каятна? Хăш ялсем?" – "Çĕньялсем". "Ă-ă! – терĕ те вăр-вар çĕре анчĕ. – Çĕньял инçетре. Атя, кĕр, чей ĕçсе кай". Эпĕ: "Пасара васкатăп", – тетĕп. "Эппин, каялла кайнă чух кĕр, кĕмесĕр ан кай. Атя-ха, эп сана пĕр япала кăтартатăп – халь кăна туса пĕтертĕм". Мана хăйсен картишне илсе кĕчĕ. Унта вĕр çĕнĕ тăрантас ларать. Паллах, тăрантассем куркаланă-ха эп. Ку та çав тăрантассем пекех. Çавăн пекех те, анчах çавăн пек мар: ку тĕкĕнсенех хăй тĕллĕн кусса каяссăн туйăнать. Е вĕçсе каять-и... Эп аслă ывăла авлантарасшăн-çке. Пуçăмра пĕр шухăш çаврăнать: "Эх, çĕнĕ кине çак тăрантас çине лартса килесчĕ те!.." Садри: "Килĕшет-и?" – тет. "Килĕшет". – "Кирлĕ пулсан эп сана çакăн пеккиех туса паратăп. Эс хăш вăхăт тĕлне тумаллине кала, тата чăваш тĕррисене илсе кил – кирлĕ пулма пултарать". Çук ĕнтĕ, кун йышши тавар ман валли мар... "Пурăнатăп-ха капла та..." – тетĕп. Мĕнле сисĕмлĕ-ха вăл, сассăм тăрăхах туйса илчĕ пулĕ ман хурланчăк кăмăла. Вăл тепĕр самантранах мĕн тунине эсир çапса пăрахсан та ăнкараймастăр.

– Мĕн, мĕн турĕ? Кала-ха, кала, – хĕтĕртрĕç ăна тăванкассем.

– "Манран – тăрантас, санран – икĕ лав вутă пултăр!" – терĕ те, аллине тăсрĕ. Тăснă алла чăмăртаманни çынна хисеплеменни, кӳрентерни пулать-çке.

– Ăна мĕншĕн кӳрентермелле? Ăна тав тумалли çеç!

– Чăмăртамаллаччĕ аллине!

– Чăмăртарăм. Алли лайăх – çирĕп те шанчăклă.

– Эх, тăрантас! Лашисем те юсавлă, урапи те пуставлă!

– Апла çунатлă тăрантас песплат лекнĕ-ха сана! Пирĕншĕн – вăрманьенсемшĕн – икĕ лав вутă мĕн вăл?

– Песплатах пулчĕ çав. Шутласа хутăм-ха: паратăп ăна виçĕ лав – юман вутти. Çавнашкал уçă кăмăллă пулнăшăн парăмра юлмăп-ха. Пасара кайнă чухне çула май вăрман кучченеçĕ – пыл, мăйăр, кăмпа, чей валли Чипер ĕшнере татнă тутлă шăршлă курăксем – парса хăварăп.

– Чим-ха, чей ĕçрĕн-и вара вĕсем патĕнче?

– Эп, мĕн, çав териех сĕмсĕр-и? Пушă алăпа, пĕрре чĕнсех сĕтел хушшине ларатăп-и? Ак чăваш тĕррисене илсе кайнă чухне карасла пыл илетĕп, мăйăр илетĕп. Ун чухне те чĕнсен вара ларăп сĕтел хушшине.

– Кучченеçне хăшне тыттарăн-ха? Хуçине-и, хуçи майрине-и?

– Манăн тутарсен йăли-йĕркине пĕлес пулать-ха, – терĕ асăрхануллă чăваш.

– Эп пулсан пуçăма тайса, сăйласа Фатимана панă пулăттăм... – ĕмĕтленчĕ илĕртмĕш.

– Санăн тата "Салям алейкум!"* теме вĕренмелле – тутарсене кăмăллă пулать, – ăс пачĕ тутарсен кĕрекинче ларас чăваша анлă пĕлӳллĕ учитель.

– Мĕнех? Вĕренетĕп!

– Фатимана куртăн-и? – ыйтрĕ илĕртмĕш.

– Пĕлместĕп, те çавă пулчĕ. Унта чӳречесем тулли кĕрен чечек. Те чечек чӳлмекне урăх çĕре куçарса лартрĕç, те Фатима пăхса илчĕ – пĕр чӳречинчен кĕренскерĕ вĕлтлетни курăнчĕ.

– Ах, вĕл-вĕл кĕренскерĕ, – ассăн сывларĕ илĕртмĕш...

Пĕррехинче пĕрле пуçтарăннă арçынсем шăп çеç ларнă. Калаçăва чи ватти пуçланă:

– Пĕр канăç та çук. Ĕç-пуç чипер чухнех чĕре шартах сикет: пирĕн тутар мĕнле пурăнать-ши, тытăнмарĕ-ши хăйĕн ĕлĕкхи ĕçне? Эпир ăна пуçĕнчен кăна шăлтăмăр, теприсем пашкине касса ывăтĕç. Çынни ытлаванах вĕт!

– "Ытлаван" кăна мар, ылтăн çын! Ун юнĕ шухă!

– "Шухă..." Темех мар. Пирĕн Атăл ав хăш чухне епле кĕрлевлĕ юхать. Пĕрех çыранĕсем иртĕхсех кайма памаççĕ. Ку çынна та чарас пулать.

– Мĕнле чараятăн ăна? Карта каратна? Сан картуна вăл туххăмрах татса ывăтать те вăшт кăна сиксе ларать кăтра çилхеллĕ çӳрен ут çине.

– ... çав карта çумĕнчи çерем çинче çӳрекенскер çине, – шӳтлесшĕн пулчĕ пĕри.

– Халь шӳтлемелли вăхăт мар, – касса татрĕ ватти. – Эпир шиклĕ самант таппинче. Манас марччĕ – вăл пирĕншĕн ют мар.

– Мĕнле чарса лартăпăр-ха ăна?

– Ăна сăмахпа чарса лартмалла.

– Сăмахпа?! – шалтах тĕлĕнчĕç хăшĕсем. – Эс ăна: "Ун пек тума юрамасть – намăс ĕç ку", – тетĕн. Вăл: "Юрĕ, юрĕ, урăх ун пек тумастăп" тейĕ-и? Пире пуш сăмахсем кирлĕ мар.

– Çавнашкал асап курнă хыççăн урăх ун пек тумасть пулĕ-ха. Ăса кĕчĕ пулĕ.

– "Пулĕ..." "Пулĕ" вăл шанчăклă япала мар. Усал йăла вăл çынран хăпасшăн мар, ăна манăçнă тесе тăратăн, вăл усал кăмпа пек тапать те тухать. Кунта çирĕп йĕрке, çирĕп пăркăч кирлĕ – унталла та кунталла ан пăркалантăр. Пирĕн ăна тупа тутарас пулать. Кӳнтеленсем умĕнче. Кӳнтелен-

*Салям алейкум (тутар.) – саламлатăп.

ёсем чăвашсемпе тутарсем пулччăр. "Урăх нихăçан та лаша вăрламастăп" тесе тупа тутăр. Çапла пăркăчламалла ăна.

– Çав намăсла ĕçе вăл Фатимашăн пăрахма тивĕçлĕ. Эп Фатимана йĕртесшĕн мар, – вирлĕн касса татрĕ илĕртмĕш.

– Калама çăмăл та ĕçне мĕнле тумалла-ха... Ăна вăйпа нимĕн те тутараймастăн.

– Ак пĕрле сӳтсе яватпăр. Ку ĕçе вăраха яма юрамасть. Кайран Якурпа калаçса пăхăпăр. Çакна унăн тума тивет. Вăл каларĕ-ха: "Садри çĕнĕ хапха тăвасшăн", – терĕ. Апла вĕсем кĕçех картуна килеççĕ – вăрман касма.

– Тата мĕнле хапха кирлĕ-ха ăна? Ку хапхи те картинккă пек... Пĕтĕм иртен-çӳрен чарăнса тăрса тĕлĕнет.

– Тутарсем вĕсем пĕр-пĕрне пулăшакан халăх. Садрин çур Шăнкăртам тăван-пĕтен пулĕ-ха. Çавсене пулăшать.

– Фатима тăванĕсене те пулăшать ĕнтĕ... – ăмсанчĕ илĕртмĕш.

Ватти хăйĕн шухăшне пĕлтернĕ:

– Вăрман касма килсен вĕсем картунта пурăнаççĕ. Апатне тулта, картун умĕнче пĕçереççĕ. Унта пысăк такан ларать. Такан çинче – пысăк хуран. Акă вĕсем кăвайт чĕртеççĕ... Шӳрпе пĕçересшĕн.

– Сурăх какайĕнчен-и?

– Паллах! Тутарсем сурăх какайне кăмăллаççĕ.

– Тутарсем ĕшеннĕ – кунĕпе вăрман каснă-çке. Халь хуран тавра лараççĕ: хăшĕ пĕрене çинче, хăшĕ çерем çинче. Садри шӳрпе пăтрататать. Тупа тутармашкăн питĕ меллĕ самант.

– Якур ăçта? Унăн кӳнтелен те хатĕр пулмалла.

– Якур тунката çинче ларать, кӳнтеленĕ çерем çинче ларать.

– Кӳнтеленĕ Якур çумнерех лартăр, кирлĕ самантра Якур ăна тĕксе илтĕр.

– Кӳнтеленĕ тункатапа юнашарах ларать. Кирлĕ чухне Якур ун ури çине пусса илĕ. Хальлĕхе пурте шăп кăна лараççĕ. Йĕри-тавра лантăшла хурăнсем шĕпĕлтетеççĕ. Халь çеç каснă пĕренесенчен сухăр шăрши кĕрет.

– Тата шăпчăксем юрлаччăр, – çепĕç сасăпа хушса хучĕ илĕртмĕш.

– Юрлаççĕ, юрлаççĕ! Пур енче те шăпчăк юрри янăрать.

– Садри халĕ те шӳрпе пăтрататать-и-ха?

– Пăтрататать. Ак Якур ӳсĕркелесе илчĕ – темĕскер каласшăн.

– Ух, мĕнле хатарлă самант!.. Мĕн тейĕ-ха?

– Якур: "Мĕнле лайăх!.." – терĕ. Пурте пуçне сулчĕç.

– Садри те пуçне султăр!

– Суллать! Тата шӳрпине пăтраткалать.

– Якур малалла каларĕ: "Питĕ телейлĕ пурăнма пулать – совĕçпе çеç пурăнмалла".

Халăх кар хирĕç тăчĕ, килĕшмерĕ унпа.

– Çук, çук, ун пек калама юрамасть!

– Ун пек каласан вăл мĕн çинчен систернине тӳрех ăнкарса илет. Ăна совĕç çинчен аса илтермелле мар. Совĕçĕ пур унăн! Тен, хăй те намăсланать пулĕ-ха. Мĕншĕн суранĕ çине тăвар сапас? Ансат каламалла. Атя çĕнĕрен пуçла!

– Ара, Якур тунката çинче ларать. Хуран айĕнче кăвар тĕлкĕшнине сăнать. Шухăша кайнă, шăппăн калаçать.

– Анчах пурте илтчĕр!.. Атя çĕнĕрен кала!

– Ара, Якур тунката çинче ларать. Шухăша кайнă, шăппăн калать – хăйпе хăй калаçнă пек...

– Ах, ăшĕ мĕнле вĕркет пуль!.. Чăт ĕнтĕ, чăт, Якур! Атя çĕнĕрен кала!

– Якур çапла калать: "Пурăнăç кăткăсах та мар вăл: çăкăрна ху вăюпа ĕçлесе çи, никама та ан кӳрентер. Пулчĕ те!" Унпа килĕшсе пурте пуçне сулласçĕ. Ак Садри те сас пачĕ.

– Мĕн, мĕн тет-ха?

– Каларĕ ансат та шăппăн: "Яланхи пекех, Якур абый тĕрĕс каларĕ. Чăнах, никама та кӳрентермелле мар".

– Çапла çеç каларĕ-и? Ку çителĕксĕр! Тупа сăмахĕ ăçта?!

– Ан шавла-ха! Тупа патне çывхарса пыраççĕ. Якурăн хевти çитинччĕ çеç... Садри калаçать-ха. Юлашки сăмахĕсене вăл хăйне валли, питĕ шăппăн каларĕ: "Эпĕ урăх нихăçан та лаша вăрламастăп".

– Ух! Халь мĕн тумалла ĕнтĕ?

– Сăмах сулăмлă пултăр тесен çакăн пек чухне халăх ячĕ-сумĕ çине тайăнмалла, – калаçăва хутшăнчĕ анлă пĕлӳллĕ учитель.

– Апла тайăнтар часрах! Мĕнле каламалла? Вăхăт шăвать! Якур ним тума аптăраса тăрать.

– Малтан çакăн пек калас пулать: "Пурте пĕлеççĕ: тутарсем – хăйсен сăмахне çирĕп тытакан шанчăклă халăх". Якур ура çине тăрать те Садри патне пырать. Малтан вăл тутар халăхĕн чысĕ-хисепĕ çинчен калать, вĕçĕнче пĕтĕм сăмаха çапла пĕтĕмлетет: "Садри, эпир, çакăнта тăракан тутарсемпе чăвашсем, эсĕ мĕн каланине илтрĕмĕр. Эпир пурте пĕлсех тăратпăр, эсĕ мĕнле каларăн, çавăн пек пулать те!"

– Часрах аллине тăстăр!

– Тăсрĕ! Вĕсем пĕр-пĕрин аллине чăмăртарĕç. Пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхса ăшшăн кулса илчĕç.

– Кайран мĕн тумалла?

– Нимĕн те тумалла мар. Картун çуртĕнчен пысăк чара тата тирĕксем илсе тухрĕç. Садри шӳрпери аш-какая чарана туп-тулли тултарса çерем çинех лартрĕ. Унтан вăл кашнин тирĕкне шӳрпе яра-яра пачĕ. Малтан пĕр сассăр апатланчĕç, хуллен-хуллен майĕпен шӳтлеме-кулкалама пуçларĕç. Юлашкинчен çак кун чăн-чăн уяв пулса тухрĕ.

Тупа тутармалли меслет тупнӑ ҫынсен калаҫӑвне Ҫӗньял илӗртмӗшӗ вӗҫлерӗ:

– Ҫавӑн чухне пӗри ирччен шӑпчӑксем юрланине итлерӗ...

Якур хӑйне шанса панӑ ӗҫе мӗнле пурнӑҫлани паллӑ мар. Анчах та вӑл кӗҫех ырӑ хыпар пӗлтернӗ: малашне Ҫӗньял ҫеҫ мар, таврари ялсем те канлӗн пурӑнма пултараҫҫӗ...

Ҫӗньялсем Садри айӑпне астӑваҫҫӗ пулин те, ӑна пӗрре те аса илмерӗҫ (тен, аса та илесшӗн пулмарӗҫ?). Ҫӗньял арҫыннисем кула-кулах пӗтӗм ӗҫ-пуҫа пуҫхӗрлӗ тӑратрӗҫ. Ҫӗньял лашисем ҫухалнӑшӑн никама та мар, лашисене хӑйсене айӑпларӗҫ: "Лашасем Садрине юратаҫҫӗ вӗт: ӑна таҫтан-таҫтан сиссе тӑраҫҫӗ, ун патне хӑйсемех сиктерсе пыраҫҫӗ. Садри аптӑрасах ҫитнӗ вӗсемпе: кам лаши ку, ӑҫтан килнӗ – вӑл пӗлмест-ҫке-ха, ҫавӑнпа унӑн лашана ирӗксӗрех хӑй патне илсе кайма тивнӗ".

## 8

Ҫӗньял арҫыннисем Садрипе питӗ хӑвӑрт мирлешнӗ. Вӗсем пурте тенӗ пекех хут пӗлмен ҫынсем пулнӑ. Анчах вӗсене халӑх, халӑх пурнӑҫӗ, халӑх йӑли-йӗрки чи кирлине – пурӑнӑҫ никӗсне: пӗр-пӗринпе мӗнле пурӑнмаллине, ҫутҫанталӑка сиен кӳме юраманнине – вӗрентнӗ. Ҫӗньялсем ачаранпах тӗнчере чи хӑрушӑ ӗҫ ҫынвӗлерӳ иккенне пӗлсе ӳснӗ. Ҫакна пӗлсех халь ӗнтӗ хӑйсем ҫав ӗҫе тӑвакансем пулса тӑчӗҫ: Якур пасарта Садрине тӗл пулни ҫинчен каласа париччен вӗсем ҫав тутар вилнӗ тесе шутланӑҫке, ӗнтӗ пӗтӗм ял ҫав тискерлӗх тыткӑнӗнче пурӑннӑ. Ҫынни вилмен иккен! Ӑна чӗрӗлле курнӑ! Унпа калаҫнӑ! Лайӑх ҫын-и вӑл, начар ҫын-и, халӗ ку ниме те пӗлтермен. Чӗрӗ ҫеҫ пултӑр... Анчах та вӑл вӗсен ялне (ӑна пӗтӗм ялӗпе хӗненӗ-ватнӑ яла) "чи лайӑх ял" тет, ҫак ял ҫыннисене "чи ырӑ ҫынсем" тет, вӗсене тараватлӑн хӑйӗн килне чӗнет. Хӑйне чӑваш ялӗнче мӗнле асаплантарнине вӑл Шӑнкӑртамра никама та каламан иккен – чӑвашсем унччен Шӑнкӑртам урамӗсемпе мӗнле ҫӳренӗ, халӗ те пӗр хӑрамасӑр ҫӳреҫҫӗ. Ҫакна ӗненмелле те мар пек. Анчах та ҫӗньялсем тӳрех ӗненнӗ, мӗншӗн тесен урӑхла пурӑнма пултарайман. Тав тӑвас килнӗ вӗсен. Кама? Мӗне? Пурне те. Вилме пултарнӑ, тӗрӗсрех, вилмеллех амантса пӗтернӗ ҫын чӗрӗ юлнишӗн. Хӑйсене пур енчен те хӗстернӗ, хупӑрланӑ тӗттӗм хушӑкран ҫутӑ уҫлӑха тухнӑшӑн. Ҫав вӗҫ-хӗрсӗр уҫлӑхра чӑвашсем те, тутарсем те ҫукчӗ. Унта этем те пурӑнӑҫ кӑначчӗ, вӗсене вара – пурӑнӑҫпа этеме – суранлатма юрамастчӗ. Вӗсем ҫак кунсенче вӗҫсӗр кулни-шӳтлени, айккинчен пӑхсан, ҫӑмӑлттайлӑх пек курӑннӑ пулӗ те, чӑннипе вара ку вӗсем сӗмлӗхрен тухнине, тасатакан савӑнӑҫ варкӑшне пӗлтернӗ. Тата чи ватти Садри ҫинчен: "Вӑл пирӗншӗн ют мар", – тенӗ те, пурӑнӑҫ йӗрки хӑй картне ларнӑ...

Çĕньял хĕрарăмĕсем çак кунсене урăхларах чăтса ирттернĕ. Вĕсем, кил ăшшине сыхлакансем, хăйсен асламăшĕсем, кукамăшĕсем хушăнтарса-упраса тăнă ăшă пĕр самантрах çухалнине, ун вырăнне киле сивĕ тулнине пĕтĕм ăш-чиккипе туйса сехĕрленсе курса тăчĕç (хăçан та пулин таврăнĕ-ши çав ăшă каялла, таврăнас пулсан та унчченхи пек ăшă-тайĕ-ши?). Садри чĕрĕ иккенне пĕлсессĕн вĕсем кĕскен çеç: "Турă пире хĕрхенчĕ, çын вĕлерме памарĕ", – терĕç. Анчах та вĕсем çав сивĕрен хăтăлайманччĕ-ха, ларатчĕ-ха вăл вĕсен ăшĕнче пăр татăкĕ пек. Арçынсем ирĕккĕн сывласа ячĕç пулсассăн (тен, вĕсене хăйсем пĕрле пуçтарăнни, пĕрле сӳтсе явни, Садрине курнă çынсен калавне пĕрле итлени, Садришĕн пăшăрханни – "алли-ури мĕнле-ши?" – Садрине кăмăллăн тăрăхлани пулăшрĕ пулĕ), хĕрарăмсем ытларах хăйсем тĕллĕн чăтрĕç. Йывăр чирлекене вăрахчен эмел кирлĕ евĕр, вĕсене ĕнтĕ ялти чи ватти Садри çинчен "Вăл пирĕншĕн ют мар" тенĕ чикĕ патне çитмешкĕн ăшă – вĕсен кăмăлне çавăракан, чунĕсене тивнĕ сивве майĕпен-майĕпен ирĕлтерекен ăшă – кирлĕччĕ.

Çав ăшша Çĕньял хĕрарăмĕсене тутар хĕрĕ Зульфия парнелерĕ. Вăл Шăнкăртампа юнашарах ларакан тепĕр тутар ялĕнчен пулнă.

Хирти ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн хĕрарăмсем алĕçне тытăннă: йĕтĕн-кантăр тылланă, сӳс тӳнĕ, арланă. Зульфия Çĕньяла шăп çав вăхăтра çитнĕ. Чал куçлă тăпăлкка тутар хĕрĕ килрен киле çӳресе алĕç валли тĕрлĕ тавар сутнă. Кĕçех тĕлĕнмелли сиксе тухнă: Зульфия хăйĕн таварне Çĕньялта йӳнĕрех сутать иккен. Кивелнĕ тавар сутмасть-ши вăл? Тĕрĕслесе пăхнă – пур таварĕ те паха. Ĕнтĕ Çĕньяла урăх сутуçă пырас-тăвас пулсан хĕрарăмсем мăнкăмăллăн хуравланă: "Эпир кун пек тавара Зульфияран туянатпăр". Çавăн пек сăмахсем пахалăх кĕлемипех танлашнă.

"Зульфия килнĕ!" тенине илтсенех пĕтĕм Çĕньял хĕрупраçĕ чупкаламакускалама пуçланă: "Зульфия хăш килте-ши? Пирĕн пата та кĕтĕрччĕ!" Арçынсем шӳтленĕ ĕнтĕ: "Паян пирĕн арăмсен уяв – Зульфия килнĕ!"

Кама мĕн кирлине Зульфия хут çине çырса пынă. Çăмăл уралăскер, пырса кĕрет те пĕр-пĕр киле: "Аппа, сана мĕн кирлĕччĕ-ха, эп мĕн илсе килтĕм-ха", – тесе хутне кăларать, таварне сарса хурать. Килти пĕтĕм ама чун – пĕчĕк хĕрачаран пуçласа ватă карчăк таранах – кĕпĕрр сĕтел тавра пуçтарăнаççĕ.

Хĕрарăмсем хăйсен хушшинче Зульфияна питĕ мухтанă: "Мĕнле тĕплĕ ĕçлет!", "Çынна хисеплеме пĕлет", "Вăл ырă тума юратать". Пĕри тата тĕлĕнсе каласа панă: "Эпĕ пир тĕртсе ларattăм. Зульфия кĕчĕ те, пăхрĕ-пăхрĕ эп ĕçленине: "Аппа, эпĕ те тĕртсе пăхам-ха", – тет. Кĕрсе ларчĕ пир вырăнĕ хушшине. Пăхкаларĕ. Тытăнчĕ ĕçе: хĕççи шăкăлт та шăкăлт, ăси вĕльт те вĕльт. Эп шакмак тĕрри тĕртеттĕм. Зульфия калать мана: "Шак-

мак лайăх тĕрĕ вăл. Ăна тĕрлĕ-тĕрлĕ тума пулать. Тепре килнĕ чухне эпĕ сан валли хут çине виçĕ тĕслĕх ÿкерсе-сăрласах илсе килсе паратăп".

Пуринчен ытла ăна хĕрупраç иленнĕ. Йĕппи-çиппи, тĕрлемешкĕн тем-тем тĕслĕ мулине те тем-тем тĕслĕ вĕт шăрçа, чĕнтĕр çиппи, канва, – хĕрсем чĕвĕлтетнĕ çеç... Зульфия чăваш хĕрĕсене тутар тĕррисене те кăтартнă, хăй вара чăваш тĕррисене мухтанă.

Хĕрарăмăн чи пархатарлă вăйĕ – хĕрхенме пĕлни. Унваркăшĕ Зульфия патне те çитнĕ.

– Кунĕпе чуп-ха ял тăрăх, килрен киле çÿресе урисем те сăрăлтатаççĕ пулĕ. Килне мĕнле çитет-ха вăл? – тенĕ те ватăрах хĕрарăм, тепри, кирлĕ чухне мухтанса илме пĕлекен арăм, ĕç-пуçа тÿрех татса панă:

– Чим-ха, эпир камсемччĕ-ха? Садри пирĕн Якур пиччене мĕн тенĕччĕ-ха? Эпир – чи лайăх ял... Эпир – чи ырă çынсем... Мĕн, эпир, чи лайăх ялта пурăнакан чи ырă çынсем, хамăр валли тинĕс тĕпĕнчен тупакан ахах-мерчен илсе килекен Зульфияна килне лашапа леçсе яраймастпăр-и? Паян акă ăстарикпе иксĕмĕр хамăрăн çăлтăр-хушкана кÿлетпĕр те Зульфияна килнех çитеретпĕр!

– Текех Çĕньялтан çуран уттармăпăр, черетпе леçсе тăрăпăр.

– Тăрантаспа та леçĕпĕр.

Зульфияна леçнисем каялла таврăнсан тĕлĕнмелле хыпар пĕлтернĕ:

– Зульфия кам иккенне пĕлетре? Вăл – Садри аппăшĕн хĕрĕ!

– Апла Садри унăн куккăшĕ пулать, – тенĕ ватăрах хĕрарăм.

– Хамăрăн ĕнтĕ! – тенĕ халăх. – Хамăрăн!

Çĕньял хĕрарăмĕсен ăшĕнчи пăр майĕпен-майĕпен йăлтах ирĕлсе пĕтнĕ те ун вырăнне пархатарлă ăшă вырнаçнă...

Пĕр каçхине вăрман хуралçипе арăмĕ картун умĕнчи сак çинче хĕвел аннине пăхса ларнă. Тавралăха хуллен каç сĕмлĕхĕ хупăрланă. Хĕвел аннă тĕлте çеç, кăштах çутă юлнă çĕрте, хăрушла хĕрлĕ пĕлĕтсем кармакланнă.

– Пушар тухман-и унта? – шикленÿллĕн ыйтнă Марье.

– Çук, хĕвел çапла анать... – хуравланă Якур.

Пĕр кана шăппăн ларнă хыççăн вĕсем каллех калаçса илнĕ.

– Пĕлетне, Марье, эпĕ тăтăшах Садрине хĕненĕ куна аса илетĕп. Эп çавăн чухне картунта мар, ялта пулнă пулсан мĕн пулатчĕ-ши?..

– Эс пулма пултарни çинчен мар, пулни çинчен шухăшла. Пулса иртнин вĕçĕ вара – телейлĕ. Пуриншĕн те телейлĕ.

– Вăл çапла-ха... Анчах эпĕ тăтăшах пĕр тĕлĕк тĕлленетĕп. Ял варринче кăшкăрашаççĕ пек. Эп çавăнта чупатăп пек. Хам икĕ чăмăрккана та чăмăртанă. Эпĕ те халь-халь хĕнеме пуçлатăп пек. Эп çак тĕлте вăранса каятăп та вилнĕ пек вырта-

тăп... Теменшĕн эп Садришĕн ялан шикленетĕп. Ман ăна хамăрпа çывăхарах пурăнтарас килет, мĕн те пулин сиксе тухсан хӳтĕлеме май пултăр...

– Эс мĕн калаçан? Вăл мĕнле хăюллă, хастар! Вăл пĕччен пĕтĕм яла хӳтĕлеме пултарать.

– Вăл çапла-ха... Хăйне кам хӳтĕлĕ-ха?.. Эс пĕлетĕн вĕт – эпĕ ăна питĕ юрататăп...

– Вĕсене... – тӳрлетрĕ ăна арăмĕ.

– Паллах, вĕсене – иккĕшне те... Садрине пĕччен курсан, ман ун çумĕнче Фатимана курас килет, Фатимана пĕччен курсан, ун çумĕнче Садрине курас килет. Вĕсем хальччен ӗнех çураçнă хĕрпе каччă пек.

– Вĕсем пĕр-пĕринсĕр пурăнаймаççĕ. Çавăн пек юратакансем вилессе те пĕр кунрах вилеççĕ тет. ... Пăх-ха, мана унта вут тухнă пекех туйăнать. Вăл енче – ялсем...

– Çук, хĕвел çапла анать. Çавах та Садри юнашар пурăннă пулсан эп уншăн хăраман пулăттăм...

9

Чăнах та, ача чухне, яш чухне мĕн курни ĕмĕрлĕхе аса кĕрсе юлать. Эпĕ халĕ 75 çулта. Эпĕ нимĕнле начар çанталăкран та хăрамастăп. Кирек мĕнле асар-писер çанталăкра та мана халь-халь алăк уçăлассăн, унтан: "Кызым*, мĕнле пурăнатăн?" – тени илтĕнессĕн туйăнать. Эп вăтам шкулта вĕреннĕ чухне япăх çанталăка пула киле кайма май пĕтсен Абдулла пичче мана нумай хутчен апат-çимĕç пырса панă. Вăл хăçан-хăçан килнине эпĕ халĕ те астăватăп. Пуринчен ытла шар сивĕ кун (çавăн пек чухне "Çерçисем вĕçнĕ чухнех шăнса вилеççĕ" тетчĕç) аса килет. Чӳрече кĕленчисем çине пăр капланса тулнăччĕ. Чӳрече хупписене хупрăмăр та, çав пăр ирĕле пуçларĕ, йĕпе кĕленче çинче чĕпкуç çути мĕскĕннĕн мĕлтлететчĕ. Хурлăхлăччĕ...

Çавнашкал каç çитрĕ пирĕн пата Абдулла пичче – пысăк хутаç тулли апат-çимĕç илсе килнĕ çын. Вăл тăлăп, кăçатă, хăлхаллă çĕлĕк тăхăннăччĕ. Тӳрех хаваслантăмăр эпир, ăна хупăрласа илтĕмĕр. Пирĕн унпа калаçас килетчĕ, юнашар ларас килетчĕ...

Тухса каяс умĕн вăл Плаки инкерен: "Сирĕн краççын пур-и?" – тесе ыйтрĕ. "Кăштах пурччĕ-ха", – терĕ Плаки инке.

Абдулла пичче тепĕр кунах вуннăлла лампа тата краççын илсе килчĕ...

1956-мĕш çулта вăл ман пата çу уйăхĕнче пынăччĕ. Йĕри-тавра сарă акаци чечек çурнăччĕ. Тавралăх лаппăн-лаппăн ылтăнпа сăрланнă пек курăнатчĕ. Эпир кил умĕнчи сак çине лартăмăр. Эпĕ ĕнтĕ вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Халь киле кайма пуçтарăннă. Абдулла пичче мана вăтам пĕлӳ илнĕ ятпа саламларĕ те çапла каларĕ: "Кызым, эс халь института

*кызым (тутар.) – хĕрĕм.

вĕренме каятăн. Çакна астусах тăр: санăн вĕренме кĕресех пулать. Ку пире пурне те кирлĕ". Унăн çирĕп сассинче саламлани çеç мар, хушсах-ыйтсах калани сисĕнчĕ: вăл мана института вĕренме кĕме хушать. Абдулла пичче таçта çӳлелле пăхса илчĕ те, мана мар, тĕнче уçлăхне каланă пек: "Пирĕн Ильгиз çав тери института вĕренме кĕресшĕн", – терĕ. Эпĕ Ильгиз института кĕме кайнине пĕлеттĕм-ха (кайнă пулсан вĕренме кĕнех ĕнтĕ вăл, урăхла пулма та пултараймасть!), çавăнпа питĕ тĕлĕнтĕм: "Ара вăл вĕренмести?" – "Вăл икĕ хут та вĕренме кайрĕ, анчах ăна илмерĕç". – "Камсем илмерĕç?" – "Çынмаррисем". – "Мĕнле çынмаррисем?!" – "Кайран пĕлĕн-ха. Юлашки хут кайсан экзамен тыттараканĕ ăна тӳрех каланă: "Çамрăк çын, эсĕ питĕ пултаруллă. Хуçăлса ан ӳк! Сана кăçал йышăнмаççĕ. Икĕ çултан кил. Çав тĕле пурăнăç улшăнатех акă. Кил те тӳрех мана шыраса туп. Эпĕ сана кĕтсех тăратăп", – тенĕ. Çак вăхăт çитрĕ. Вăл института кĕме каять". – "Ильгиз халь ăçта?" – "Ялта, платниксемпе пĕрле ĕçлет. Ун алли ылтăн". – "Аслашшĕ пек-и?" – эпĕ Садри пичче питĕ ăста платник пулнине халăх хальчченех астунине аса илсе çапла ыйтрăм. "Чăнах, вăл аслашшĕне хывнă". – Абдулла пичче каллех çӳлелле, уçлăха, пăхса илчĕ. Эпĕ ун куçĕсене асăрхаса юлтăм – куççульсĕр йĕрекен куçсем... Çав тери, çав тери хĕрхентĕм эпĕ çак çынна. Ман ăна мĕнле те пулин йăпатас килчĕ, çавăнпа: "Ильгиз института кĕретех!" – терĕм. Абдулла пичче шӳтлесшĕн пулчĕ: "Халь ĕнтĕ ку санран килет, эс вĕренме кĕрсен вăл та вĕренме кĕрет!" "Эп вĕренме кĕретĕпех, кĕретĕпех! – терĕм те хамах туйса илтĕм: эпĕ тупа турăм вĕт! Унтан хушса хутăм: – Вăл вĕренме кĕрсен мана тӳрех пĕлтерĕр". – "Пĕлтеретпĕр".

Çул çине вăл мана катăклă сахăр пачĕ...

Эпĕ çу тăршшĕпе института кĕме хатĕрлентĕм. Эпĕ тивĕçлĕччĕ института кĕме – аннешĕн тата Абдулла паччешĕн.

Экзамен тытнă чухне пĕтĕм чунăмпа туйса тăраттăм – çак самантра Ильгиз та экзамен тытать. Пĕрре те иккĕленместĕмччĕ – ăнăçлă кăна мар, тĕлĕнмелле чаплă тытать вăл! Эпĕ те тăрăшаттăм. Физикăпа экзамен тытнă чухне тĕлĕнтермĕш пулса иртрĕ. Ку предметпа манăн "5" паллă çеç илмеллеччĕ. Малтанхи икĕ ыйтăвне питĕ лайăх пĕлеттĕм, виççĕмĕшне – задачине – шутлаймарăм. Эпĕ хуравланă чухне экзамен тыттараканĕ (хĕрарăм) мана питĕ тимлĕ итлерĕ. Виççĕмĕш ыйту патне çитсен: "Çитет!" – терĕ те урăх нимĕн те ыйтмарĕ. Вăл мана "5" лартса пачĕ те ыталаса илсе: "Ачам, эс вĕренме кĕретĕнех!" – терĕ. Эпĕ çав педагог хушаматне ĕмĕрлĕхе астуса юлтăм. Унăн хушамачĕ – Немировская. Эп института вĕренме кĕтĕм. Пĕлсех тăраттăм: Ильгиз та вĕренме кĕнĕ. Эпĕ çакна çирĕплетекен хурава çеç кĕтеттĕм. Сентябрь пуçламăшĕнче "Ильгиз строительсен институтне вĕренме кĕнĕ" текен хыпар çитрĕ... Эпĕ йĕрсе ятăм...

## 10

Эпĕ Мускавра пурăнатăп. Литература ĕçĕсемпе тăтăшах Шупашкара киле-киле каятăп. 2009-мĕш çулта эпĕ Чăваш кĕнеке издательствине килнĕччĕ. Директор патне кĕтĕм. Унăн сĕтелĕ çинче пысăк хапаллă икĕ хулăн кĕнеке выртатчĕ.

– Çакăн пек кĕнеке тухрĕ, паллашăр, – терĕ директор.

Икĕ томпа вырăсла тухнă кĕнеке "Книга памяти жертв политических репрессий в Чувашской Республике" ятлăччĕ...

Ку кĕнекене сĕртĕнсен те чун çӳçенет. Эпĕ пĕрремĕш томне уçрăм. Кĕнеке тутарла хушаматран пуçланать-мĕн: Абаев. Шăнкăртам районĕ, Шăнкăртам ялĕ. Пĕтĕм чун-чĕре сӳлесе кайрĕ. Ал-ура сулчăланчĕ. Çав кисретӳре мана хăй вăхăтĕнче пĕлменни, уçăмсăрри аса килчĕ. Тахçан, ача чухне, эпĕ аннерен: "Садри пичче ăçта пурăнать?" – тесе ыйтнăччĕ. Анне: "Те пурăнать ĕнтĕ вăл..." – тенĕччĕ. Тахçан, вăтам шкулта вĕреннĕ чухне, эпĕ манăн хваттер хуçи Садри çинчен вăрă-хурах тенине аннене каласа патăм та вăл çийĕнчех Плаки инке патне килчĕ. Вĕсем иккĕшĕ куççульне шăлашăла чылайччен калаçса ларчĕç. Тата Абдулла пичче такамсене "çынмаррисем" тенĕччĕ.

Эп иккĕленмерĕм – çак хăрушă кĕнекере пурах Садри пичче хушамачĕ.

Анчах эп ун хушаматне пĕлместĕп. Тен, ăна манăн тăванăмсем те пĕлмен, вĕсем ун ятне пĕлнĕ, унăн кил-çурчĕ ăçта ларнине пĕлнĕ, тăванла хутшăнса пурăнма вĕсене çакă та çителĕклĕ пулнă. Халь ăна пĕр меслетпе çеç тупма пулать: пин-пин хушамат хушшинче Шăнкăртам тутарĕсене шыраса "Садри" ятлине тупас.

Ку кĕнекене çын умĕнче вулаймастăн. Ăна вăхăтлăха ыйтса илтĕм те коридора тухрăм. Пушă пӳлĕм – конференц-зал – шыраса тупрăм. Çавăнта кĕрсе кĕтесри пĕр шкаф хыçне, чӳрече патне вырнаçрăм та кунĕпе тенĕ пекех унта лартăм. Пин-пин хушамата алфавит тăрăх кăтартнă: "А"-ран пуçласа "Я"-на çитиччен. Куçа куççуль карса илнипе вăхăт-вăхăт вулама та пултараймарăм: шăлатăп-шăлатăп куççульне, вăл каллех шапăртатса юхать...

Шăнкăртам тутарĕсен хушамачĕсем кĕнеке тăршшĕпех тĕл пулаççĕ:

АБАЕВСЕМ... АЗИЗОВСЕМ... АМЕРХАНОВ... БИКЧУРИНСЕМ... ВАЛИТОВ...

Ашшĕпе ывăлĕ... Тăвата пĕртăван... Виçĕ пĕртăван... Икĕ пĕртăван...

ВАЛИУЛЛОВСЕМ... ВАХИТОВСЕМ... ЗАБИРОВ... ЗАЙНЕТДИНОВСЕМ... ЗЕМДИХАНОВСЕМ...

Ĕçĕ-хĕлĕ: единоличник, единоличник... мулла, мулла... культура ĕçченĕсем, учитель, "Красный Октябрь" колхоз ĕçченĕ, тимĕрçĕ, Хĕрлĕ Çар салтакĕсем, бухгалтер, сутуçă, конюх, парикмахер...

ИБЯТОВ... КАМАЛЕТДИНОВСЕМ... КРЫМОВ... КУПКАНОВ... КУРЯКОВ...

Айăплав статйи – пурин те пĕрешкел – 58-мĕш статья.

КУЧАТОВ... МЕЗИТОВСЕМ... МИЗЯКОВ... МИНУЛЛОВСЕМ... МУЛЮКОВ...

Приговорне Чăвашри НКВД* çумĕнчи Спецтройка йышăннă.

НАСЫРОВ... ПЕТКЕЕВ... ПУГАЧЕВ... РЯМКЕЕВ... САЛЕЕВСЕМ... САМАТОВ...

Приговор: персе вĕлермелле. Пурлăхне туртса илмелле.

СУБХАНГУЛОВ... СУФЬЯНОВСЕМ... ФАСХУТДИНОВ... ХАЙБУЛЛОВСЕМ... ХАЛИТОВ...

Приговор: концлагере хупмалла.

ХУСНУТДИНОВСЕМ... ЧЕРЕКОВ... ЧУЛАКОВ... ЧУМАКЕЕВ... ЧУРАКАЕВ...

Приговор: Çурçĕре ямалла. Унта этаппа çитермелле.

ШАКУРОВСЕМ... ШАМАСОВ... ШАМБАЗОВ... ЯКУШЕВСЕМ... ЯНТЫКОВСЕМ...

Приговор: Ĕçпе юсанмалли лагере хупмалла.

"Садри" ята эпĕ икĕ тĕлте тĕл пултăм. Пирĕн Садри пиччепе танлаштарсан, пĕр çынни ытла çамрăкчĕ, тепри Шăнкăртамран мар, унпа кӳршĕллĕ ялтанччĕ.

Кĕнекере хăш-пĕр документсене те кăтартнă. Çак документри кашни сас-палли – хытнă юн тумламĕ пекех. Çынмаррисем хатĕрленĕ документ:

"Немедленно приспособить соответствующее помещение в здании НКВД (желательно подвальное), пригодное под спецкамеру для выполнения приговоров о расстреле.

Исполнение приговора – расстрел производится ночью.

После выполнения приговора трупы должны быть вывезены к заранее приготовленной яме, тщательно зарыты и ямы замаскированы.

... Должна быть обеспечена полная конспирация места, времени, а также техника исполнения приговоров о высшей мере наказания.

От всех лиц, привлекаемых к работе, связанной с перевозкой трупов, приготовлением и засыпкой ям, – должны быть отобраны подписки о неразглашении".

Кĕнекене каялла тавăрса памаллаччĕ. Ăна йăтса пыма та йывăрччĕ – унта хут листисем мар, тимĕр алăксем тейĕн. "Тата тепри!", "Тата тепри!" тесе кĕрĕслетсе уçăлакан алăксем...

Манăн никама та курас килмерĕ. Эпĕ тĕл пулакана сывлăх та сунаймастăмччĕ пулĕ: этем сăмахĕсем таçта çухалчĕç, вĕсене аса та илейместĕмччĕ пулĕ. Мана чăваш ачин сăмахĕсем çеç аса килчĕç: "Эпĕ Фатимана йĕртесшĕн мар..."

*НКВД (вырăс.) – Народный Комиссариат внутренних дел.